27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
3
ЫТЛАРИКУН
195(6690) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тырпул хатĕрлевĕн хăвăртлăхĕсене татăклăнах ÿстермелле

Ялхуçалăхĕнчи работниксем кăçал çанталăка ÿпкелеме пултараймаççĕ. Тырпулсене пухса кĕме тытăннăранпа çумăрсем пачах та çумарĕç тесен те йăнăш пулмасть. Вырма та, кĕлте кÿрсе капана хывма та, авăн çапма та, государствăна тырă турттарса пама та çанталăк чăрмантармарĕ. Пĕр сăмахпа каласан, ылттăн кĕр тăрать. Колхозăн пĕтĕм вăйне мобилизацилесе, вырнаçтарса тухма пĕлтĕн пулсан, машинăсемпе туллин усă курма тăрăшрăн пулсан, тĕл пулакан йывăрлăхсене çĕнтерес ĕçре пуçарулăх кăтартса пытăн пулсан, тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçе ăнăçлăн туса ирттерме пур майсем те пулнă. Çавăнпа та пирĕн ялхуçалăх ĕçĕсем çителĕксĕр хăвăртлăхпа пулса пыраççĕ пулсан, уншăн никам та мар, эпир çеç, чи малтан ялхуçалăхĕнчи ертсе пыракан работниксем, айăплă. Партипе правительствăна эпир мĕншĕн кайра пынине тĕрлĕ сăлтавсемпе ăнлантарса пани мар, ĕçри йывăрлăхсене çĕнтерес тесе пуçарулăх кăтартни, хамăрăн пур пек вăйсене йăлтах ĕçе кÿлсе, умра тăракан задачăсене кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртни кирлĕ. Çавăн пек ĕçлеççĕ чăн-чăн большевиксем.

Республикăра пирĕн ĕçлеме камран вĕренмелли пур. Вăрнар районĕнчи колхозсен ĕçĕпе эпир тивĕçлипех мухтанма пултаратпăр. Вĕсен чапĕ республикăра кăна мар, пĕтĕм çĕршывĕпех сарăлчĕ. Кăçал вăл районри колхозсем нумайĕшĕ кашни гектартан 100-шер пăт ытла тырă туса илеççĕ, çапла вара вĕсен тырă государствăна пама та, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама та ытлăн-çитлĕн пулать. Çакна вĕсем çине тăрса, пĕтĕм вăя хурса ĕçленипе тума пултарчĕç. Вĕсем тырпулсене вăхăтра, пĕр тăккаламасăр вырса пуçтарчĕç. Çийĕнчех кĕлте кÿрсе капана хывса лартрĕç. Авăн çапас ĕç те кунта ăнăçлăн пулса пырать. Государствăна тырă памалли плана ку районри колхозсем октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 101,5 процент тултарса, çак тĕлĕшпе республикăри районсем хушшинче пыракан ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ, çак район çинчен сăмах хускатсан, час-часах çакăн пек каланине илтме пулать: «Пур районсем те, пур колхозсем те вăрнарсем пек ĕçлесен, епле лайăх пулнă пулĕччĕ!»

Анчах тÿрех каламалла, вăрнарсем пек ĕçлекен районсем пирĕн сахалтарах-ха. Малта пыракан Шупашкар, Калинино, Сĕнтĕр, Ишлей районĕсем те государствăна тырă памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 90—95 процент кăна тултарма ĕлкĕрчĕç. Юлса пыракан районсенче вара çак ĕç тÿсме çук вăрахăн шăвать. Сăмахран, государствăна тырă парас тĕлĕшпе республикăри районсем хушшинче пыракан ăмăртура чи юлашки вырăнта Чкаловски район тăрать. Çак район тырă памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 49,2 процент кăна тултарнă. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Никитин юлташпа райисполком председателĕ Самсонов юлташ тырă памалли графика тултарма пулса пĕрре кăна мар сăмах панă ĕнтĕ. Анчах вĕсен сăмахĕсем пушă сăмахсем пулса юлаççĕ, государствăна тырă парас ĕç вара сÿрĕкленнĕçемĕн сÿрĕкленсе пырать. Сентябрĕн 20-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче район 300 тонна ытла тырă панă пулсан, ун хыççăнхи пилĕккунлăхра 274 тонна кăна панă. Курăнать ĕнтĕ, кунта хăвăртлăхсем ÿссе мар, чакса пыраççĕ. Мĕн калама пулатьха йывăрлăхсем хыçĕнче пытанса ларма юратакан çавăн пек руководительсем çинчен? Вĕсем халĕ тырпул хĕçпăшал пекех кирлине, çавăнпа тырă памалли график никам та пăсма пултарайман закон пулса тăнине, тырă парас ĕçе вăраха яни государство умĕнче айăпа кĕни пулнине халĕ те ăнланса илеймеççĕ, çавăнпа вара пушă сăмаха çапса лараççĕ.

Шел пулин те, Чкаловски район пек начар ĕçлекен районсем республикăра татах та пур. Вĕсен шутне Çĕмĕрле, Первомайски, Тăвай, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай тата ытти районсем кĕреççĕ. Вĕсем государствăна тырă памалли плана çурри ытларах çеç тултарнă. Иртнĕ пилĕккунлăхра Муркаш районĕ те хăвăртлăхсене тÿсме çук сÿрĕклетрĕ. Сентябрĕн 20-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче вăл 270 тонна ытла панă пулсан, иртнĕ пилĕккунлăхра 87 тонна çеç пачĕ, Октябрьски район та 215 тонна вырăнне 65 тонна çеç пачĕ.

Чкаловски, Первомайски тата ытти районсенче халĕ те туртăм вăйĕ çитмест тата ĕçлекенсем çитмеççĕ тесе калаçакансене курма пулать. Çакăн пек калани вăл чăн-чăн большевик сăмахĕ мар. Халĕ тырă вырас, кĕлте кÿрсе капана хывас ĕçсем вĕçленсе пынă май, туртăм вăйĕпе ĕç вăйне авăн çапнă тата государствăна тырă панă çĕре ытларах явăçтарма, çапла вара ку ĕçсен хăвăртлăхне татăклăнах ÿстерме май пур. Çакна тăвас тесен, государствăна тырă парас ĕçе конкретлăн ертсе пыни, лашасемпе пĕлсе те туллин усă курни, ĕнесемпе вăкăрсене ытларах ĕçе кÿлни кирлĕ. Пĕр сăмахпа каласан, государствăна тырă парас ĕç валли туртăм вăйне те, ĕç вăйне те кирлĕ чухлех уйăрса памалла, мĕншĕн тесен халĕ пирĕн умра унтан ответлăрах та пысăкрах задача урăх çук.

Республикăри малта пыракан нумай колхозсем государствăна тырă памалли хăйсен планне тултарнă май, халĕ ĕнтĕ районăн е пĕтĕм республикăн планне тултарасси юлса пыракан колхозсем мĕнле ĕçленинчен килет. Çавăнпа та районсенчи партипе совет организацисен юлса пыракан колхозсенче государствăна тырă парас ĕçе организацилесси, вĕсене пулăшасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Анчах та çакна вара чылай çĕрте шута илмеççĕ, тырă парас ĕçре лару-тăру улшăннă май вăл ĕçе ертсе пымалли меслетсене улăштармаççĕ, кивĕ майсемпех ĕçлеççĕ.

Пирĕн çакна та шута илес пулать. Кĕрхи кунсем иртнĕçемĕн иртсе пыраççĕ. Йĕпе-сапаллă çанталăк пуçланса кайма пултарать. Колхозсен кирек мĕнле çанталăкра та ялхуçалăх ĕçĕсене туса пыма хатĕр пулас пулать. Çакна асра тытса кашни колхозрах витнĕ итемсем тата тырă типĕтмелли сушилкăсем хатĕрлесе хурас пулать.

Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 27 çул тултарас чаплă уяв çывăхарса килет. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсен хисеплĕ задачи — çав чаплă уяв ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене срокчен вĕçлесси пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ПЯРНУ (ПЕРНОВ) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем СУР-ВЯЙН пролива урлă каçнă та МУХУ утравне туртса илнĕ.

Дрогобыч облаçĕнчи ТУРКА хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, темиçе ял туртса илнĕ, вăл шутра — БУТЕЛЬКА, ЯВОРУВ, МАТКУВ, КРЫВКА, ФЕЛИЗЕНТАЛЬ, ТУХОЛЬКА, РЫКУВ.

Румыние çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче, КЫМПУЛУНГ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем, сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче кĕрешсе, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — КИРЛИБАБА, ЛИСТУР, ЯКОБЕНИ, КОШНА, ТЭТАРУЛ, РУНКУ, СМИДИ, ПОЯНА, НЯГРА-ШАРУЛУЙ ятлă пысăк ялсем тата БОТЕШ, КИРЛИБАБА, ТИБЭУ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем çаплах МУРЕШУЛ шывĕн сылтăм хĕрринче ТЫРГУ-МУРЕШ хулинчен çурçĕртерехри плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă, ПОАРТА, ОНУКА, ТОЛДАЛАГ, ШАРП АТАК ятлă ялсене туртса илнĕ.

Темиçе кун маларах пирĕн разведка часĕсем Югослави çĕрне сăрхăнса кĕрсе кайнăччĕ. Ĕнер вĕсем хыççăн пирĕн çарсем румынсен Дунай шывĕн сылтăм хĕрринчи ТУРНУ-СЕВЕРИН хулинчен кăнтăртарахра Югослави чикки урлă каçнă та нимĕç çарĕсене малтанхи çапăçурах сирсе янă, ТЕКИЯ, КЛАДОВО, ВЕЛИКАЯ ВРБИКА, РЕТКОВО, КОРБОВА, ВАЖУГА, МИЛУ НИЛОВАЦ, ДАВИДОВАЦ, КЛАДУШНИЦА, ПЕТРОВО СЕЛО, МАНАСТИРИЦА, ПОДВРШКА, ВЕЛИКАЯ КАМЕНИЦА, ВЕЛЕСНИЦА, ЛЮБИЧЕВАЦ, ГРАБОВИЦА, БРЗА ПАЛАНКА, МИРОЧ, РАДУЕВАЦ, САМАРИНОВАЦ, НЕГОТИН ятлă халăх пурăнакан пунктсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 63 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

ОКТЯБРĔН 1-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем Югослави çĕрĕнче румынсен ТУРНУ-СЕВЕРИН хулинчен кăнтăртарахра çапăçса малалла куçса пынă, КУПУЗИШТЕ, МИХАЙЛОВАЦ, ДУШАНОВЕЦ, ПРАХОВО, МИЛОШЕВО, ВИДРОВАЦ, МОКРАНЯ, РЕЧКА, ГРАДСКОВО, ВРАЖОГРНАЦ ятлă халăх пурăнакан пунктсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 46 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Югослави çĕрĕнче румынсен Турну-Северин хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Тăшман, оборонăра тăма лайăх вырăнпа усă курса, хытă хирĕç тăнă. Пĕр чаçри боецсем тăшман укреплениййĕсенчен иртсе кайса çав тери хăвăрт атакăланă та нимĕçсене Вражогрнац хулинчен хĕссе кăларнă. Гитлеровецсем ку района хăйсен мотопехотипе танкĕсене куçарса пыма хăтланнă. Анчах совет боецĕсем тăшманăн шоссе çулĕпе пыракан резервĕсене пÿлсе лартнă та аркатса тăкнă. Пĕр участокра кăна пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ тата хăй тĕллĕн çÿрекен 6 тупă пĕтерсе тăкнă. Пирĕн ытти подразделенисем Тимок шывĕ урлă каçнă та Градсково ялне туртса илнĕ. Ĕнер çулсен паха узелĕ пулса тăракан Неготин хулине туртса илнĕ совет çарĕсем 300 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 12 тупă тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Дунай флотилийĕн карапĕсем нимĕçсен 9 катер-тральщикне тытса илнĕ.

* * *

Рига хули енче пирĕн çарсем уйрăм участоксенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. Псков хулипе Рига хули хушшинчи шоссе çулĕ районĕнче пирĕн хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсен подразделенийĕ тăшман тылне тухнă та нимĕçсен колоннине аркатса тăкнă. Совет артиллерисчĕсем çĕр гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, 16 тупă, темиçе тягач тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Кунти вăрмансене шăртласа тухнă чухне пирĕн боецсем тăшманăн 430 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Совет летчикĕсем кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 29 самолетне персе ÿкернĕ. Унсăр пусне тата тăшманăн 3 самолетне зенитнăй артиллери пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белоруссири 2-мĕш фронтра совет штурмовикĕсен ушкăнĕ, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, нимĕçсен Млава хули районĕнчи танксем пухакан мастерскойне тапăннă. Мастерской территорийĕнче пушарсем тухнă, 7 тĕлте питĕ вăйлă взрывсем пулнă. Тапăну вĕçленнĕ тĕле мастерскойăн вăтаçĕрти пĕтĕм пайне вут хыпса илнĕ. Пĕр соединени истребителĕсем иккĕмĕш хут тăшманăн Цеханув хулинчи аэродромне тапăннă. Тăшманăн зенитнăй тупписем вăйлăн персе тăнине çĕнтерсе, совет летчикĕсем нимĕçсен 11 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра пирĕн гварди подполковникĕ Остапчик командир пулса ертсе пынă бомбардировщиксен ушкăнĕ нимĕçсен çар эшелонĕсене атакăланă та çар хатĕрĕсем тиенĕ 40 вагона çити пĕтерсе тăкнă. Девятьяров капитан командир пулса ертсе пыракан штурмовиксен ушкăнĕ тăшман позицийĕсене хаяррăн штурмланă. Бомбăсем пăрахса тата тупăсемпе персе, пирĕн летчиксем нимĕçсен темиçе танкне пĕтерсе тăкнă, боеприпас складне сирпĕнтерсе янă, тăшман артиллерийĕн 5 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем çаплах Мурешул шывĕн сылтăм хĕрринчи плацдармсене аслăлатассишĕн çапăçнă. Совет подразделенийĕсем, сасартăк пырса çапса, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та тăшман аэродромĕн территорине вăркăнса кĕрсе кайнă. Аэродром хуралне вĕлерсе пĕтерсе, пирĕн боецсем нимĕçсен 14 самолетне тата авиабомбăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Балтика тăрăхĕнче тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем Хĕрлĕ Çар пырапыра çапнипе нимĕç çарĕсем ним тĕллисăр паллисĕр каялла чакни çинчен каласа кăтартаççĕ. Нимĕçсен 11-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 2-мĕш полкăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Гейнц Груневан çапла каласа панă: «Вырăс çарĕсен наступленине эпир пачах та кĕтмен. Салтаксем кăна мар, офицерсем те хăраса, пăтранса кайрĕç. Полк подразделенийĕсенче пуринче те никам та мĕн тумаллине пĕлекен пулмарĕ. Офицерсем хăшĕсем позицие тытса тăрса кашни метр çĕре юлашки патрон пĕтиччен хÿтĕлесе тăма хушрĕç, теприсем пĕр минута та кĕтсе тăмасăрах каялла чакма хушрĕç. Часах пире вырăссем атакăларĕç. Темиçе сехет хушшинче пирĕн батальон çурри çити пĕтсе ларчĕ. Батальон юлашкийĕсем вара хăраса ÿксе тарма тытăнчĕç».

Нимĕçсен 218-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 386-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Рудольф Фрейтаг çапла каласа кăтартнă: «Сентябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне пирĕн ротăра мĕн пурĕ те 9 çын кăна тăрса юлчĕ. Вăра пире 1-мĕш батальона ячĕç. Унта та 30 çын кăна юлнăччĕ. Вырăссен артиллерийĕ пирĕн позицисене пеме тытăнсан, пурте тарма тытăнчĕç. Эпĕ Генрих Бентин унтер-офицерпа тата Альфред Рат обер-ефрейторпа пĕрле пулса тăтăм. Пирĕн ĕç пĕтсе ларчĕ тесе шутларăмăр эпир. Йĕри-тавра пурте пăтрашса кайнипе усă курса, эпир хамăр подразделенирен уйрăлса кайрăмăр та тыткăна парăнтăмăр».

Нимĕçсен 263-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Иосеф Гасловер çапла каласа кăтартнă: «Пире куллен-ех пĕртен-пĕр задача паратчĕç: тем пулсан та хамăрăн позицисене çирĕп тытса тăмалла. Анчах та темле çирĕп приказсем пулсан та, эпир пĕрмай каялла чакса пытăмăр, питех те йывăр çухатусем тÿсрĕмĕр. Аманнисене пуçтарса хамăрпа илсе каяймарăмăр, пурне те çапăçу хирĕнчех пăраха-пăраха хăвартăмăр».

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче

Çапăçу хирĕ тĕлĕнче

САПАÇУРИ ÇАР, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Самолет кĕркунне çитнипе саралнă аэродром çинчен вĕçсе хăпарчĕ те часах çĕр çинчен курăнми пулчĕ. Аялта Латви çĕрĕ выртать, унта йышлă кÿлĕсем, юханшывсем, вăрмансем.

«Петляков—2» самолет пĕлĕтĕн аялти сийĕпе пырать. Аялтан вăл курăнмасть анчах та ун çинчен пĕтĕм çĕр куç умĕнчи пекех лайăх курăнса выртать.

Акă фронт линийĕ тĕлне çитрĕмĕр. Унта фронт линийĕ иккенне снарядсем çурăла-çурăла кайнинчен тата тĕтĕмсенчен пĕлме пулать. Малта, темиçе вунă километрта, тĕтре ăшĕнче Рига хули ларать. Пирĕн айра аялти Латви столицишĕн пыракан çапăçăвăн тем аслĕш хирĕ выртать. Сылтăм енче çĕр пĕтет, унтан малалла Рига заливĕн шывĕ каять. Çыран хĕрринче пĕр пысăк мар хула çунать. Халь унта, Ригăран 30 километрта, çапăçу пырать. Унтан кунтарах юханшыв тăрăх çапăçаççĕ. Унта пирĕн пĕр чаçăн боецсем, нумаях пулмасть Балтика тинĕс хĕррине шăтарса тухнăскерсем, халь шыв урлă хывнă каçсене тытса илесшĕн çапăçаççĕ. Вĕсен умĕнче, яланхи пекех, герой-разведчик, старшина Николай Грудицин çапăçать пулмалла. Николай Грудицин вăл, çапăçура хĕрсе кайса, пуринчен малтан Балтика шывĕ патне чупса çитнĕ, çав шыва ывăçтупанĕпе ăсса илсе питне çунă та, хăйĕн юлташĕсем еннелле çавăрăнса, çапла каланă:

— Халĕ ĕнтĕ кăнтăралла, Рига патнелле!

Сасартăк пирĕн çарсен колоннисене нимĕçсен «Фокке-Вульф» йышши 4 самолечĕ тапăнчĕ. Çав самолетсем çинчен çутатакан пульăсен вут-хĕм точкисем çĕр çинелле вĕçсе кайрĕç. Анчах вĕсене хирĕç çĕр синчен пысăк вут-çулăмсем хăпарса кайрĕç. «Фоккесенчен» пĕрин çине совет истребителĕ чăмрĕ. Нимĕçсен самолечĕ йăванчĕ те вăрман çине ÿкрĕ. Пирĕн икĕ самолет тăшманăн ытти истребителĕсене атакăларĕç, лешсем çавăнтах айккинелле вăркăнчĕç. «Фокке—Вульфа» персе ÿкернĕ пирĕн летчик тепĕр 2—3 минутăран тăшманăн каялла таракан машинисенчен пĕрне хăваласа çитрĕ те ăна та персе ÿкерчĕ. Машинăн аран курăнакан номерĕ тăрăх эпир çав самолет çинче сывлăшри çапăçусен мастерĕ Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ Кожедуб капитан ларнине пĕлтĕмĕр.

Рига шоссе çулĕ тăрăх нимĕç машинисен калама çук пысăк колоннисем пыраççĕ, вĕсем çаратнă пурлăха порта илсе çитерме васкаççĕ курăнать. Пирĕн тăватă «Ильюшин» вĕсене атакăларĕç те часах нумай машинăсенчен турпассем кăна тăрса юлчĕç. Залив çыранĕ патĕнче «Ильюшинсем» поездсене штурмланă, пароходсем çине бомбăсем пăрахнă.

Пĕр тĕлте каялла чакакан нимĕçсене пÿлме пирĕн ултă отряд сиксе тухрĕ. Сасартăк вăрмантан çав кавалеристсене нимĕç туппиcем пеме пуçларĕç. Совет штурмовикĕсем часах тăшман артиллерине атакăларĕç. Нимĕçсен туппиcем пеме чарăнчĕç. Пирĕн конница вара шоссе çине тухрĕ те нимĕçсен каялла чакакан пысăк ушкăнĕн çулне пÿлсе лартрĕ.

Пирĕн пуринчен ытла нимĕçсен васкаса хатĕрлекен оборона линине пăхса тухмалла. Эпир халь çав лини çийĕпе пыратпăр. Фотоÿкерчĕксем çинче окопсем, артиллери позицийĕсем тата çĕнĕрен хывнă вăрман çулĕсем лайăх палăрса тăраççĕ.

Рига хулине çитесси инçе мар. Самолет çинчен çав хулан тĕттĕм ĕмĕлки тата порчĕ курăнса тăрать, портра темиçе вунă пароход тата катерсен калле-малле çÿрекен темиçе çĕр точки курăнать. Рига хули çинче темиçе тĕлте тĕтĕм мăкăрланса тăрать: нимĕçсем Совет Латвийĕн столицине çĕмĕреççĕ. Эпир пĕлетпĕр: гитлеровецсем урамсенче çапăçма хатĕрленеççĕ, подвалсенчен дотсем туса хураççĕ, урамсенче баррикадăсем тăваççĕ, тупăсем, пулеметсем вырнаçтарса лартаççĕ. Хула çинче сасартăк вут-çулăмсем ялкăша-ялкăша кайрĕç: нимĕç зениткисем пирĕн залив патнелле каякан авиацие переççĕ. Çав авиаци вăл хĕçпăшалпа çарсем тиенĕ темиçе парохода шыва путарнă ĕнтĕ.

Пирĕн самолет каялла таврăнать. Вăл нимĕçсем йышăннă территори çийĕпе пырать-ха. Анчах та нимĕçсен, нумай пулмасть пĕтĕм Балтика тăрăхĕнче хуçаланнăскерсен, аллинче темиçе вунă таваткăл километр пысăкĕш çĕр çеç тăрса юлнă ĕнтĕ. Пирĕн айра хамăр таван çĕршыва таврăнса панă çĕр выртать.

П. БАРАННИКОВ.

Совет Эстонине ирĕке кăларнă

Эстони ССР-ĕн Верховный Совет Президиумĕн председателĕпе И. Вареспа калаçни

Совет Эстонине нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Свастикăн хăрушă паллине —вилĕм паллине ĕмĕрлĕхех Эстони столицин Таллин хулин вăтă башнисем çинчен илсе антарнă. Эстони çĕрĕ çинче каллех ирĕклĕ Хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Ленинград фрончĕн мухтавлă çарĕсем Эстони халăхĕн ывăлĕсемпе, Эстони корпусĕн ретĕнче çапăçнăскерсемпе пĕрле пирĕн тăван çĕршыва гитлеровецсенчен тасатса çитерчĕç.

Фашистла захватчиксем виçĕ çул хушши ытла хуласемпе ялсене çаратрĕç, халăха хаяррăн пусмăрласа пурăнчĕç, пуянлăхсемпе культурăн хаклă япалисене Германине турттара-турттара кайрĕç, нимĕçсен каторгине темиçе пин çынна хăваласа кайрĕç. Нимĕçсем çынсене тĕрмесене хупса тата пере-пере пăрахса, Эстони халăхĕн ирĕклĕх туйăмне пĕтерсе лартма пикенчĕç. Вĕсем мирлĕ çынсене — старниксемпе хĕрарăмсене тата ачасене пиншерĕн-пиншерĕн вĕлерсе пĕтерчĕç. Гитлеровецсем пĕр Тарту уездĕнче кăна 10.000 çынна яхăн персе пăрахнă. Хальхи тапхăрти çынсиенсем Эреда тата Клоога концлагерĕсенче тунă ĕçсем вăтам ĕмĕрхи тискерлĕхсенчен те ирттерсе яраççĕ. Вăл лагерьсенче çунтарса янă темиçе вилене тупнă.

Хĕрлĕ Çар Эстонири хуласенчен чи малтан Нарва хулине ирĕке кăларчĕ. Совет воинĕсем унта питех те хăрушă картина курчĕç. Нимĕçсем хулапа пĕтĕмĕшпех ишĕлтерсе пĕтернĕ. Фашистла варварсем пирĕн республикăри ытти хуласене те нумай сиен кÿнĕ. Эстонири культурăллă центрсенчен пĕринче Тарту хулинче предприятисенчен 40 процентне ишĕлтерсе пĕтернĕ. Авалхи университета та ишĕлтернĕ. Раадири музее, Эстонири авалхи «Ванемуйне» театра, живопись шкулне тата ытти культурăллă учреждениcене те нумайĕшне ишĕлтернĕ.

Хĕрлĕ Çар хăвăрттăн наступлени туса пырса Германи командованин шухăшĕсене пăрахăça кăларман пулсан, Эстони ССР-ĕн столицине—авалхи Таллин хулине те Нарвапа Тарту пекех ишĕлтернĕ пулĕччĕç. Таллин хулине Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе Эстони корпусĕ Таллинра пурăнакан пиншер ĕççыннисемпе пĕрле çăлса хăварчĕç. Рабочисем заводсемпе фабрикăсене, электростанцисене, коммунальнăй предприятисене нимĕçсем ишĕлтерессинчен çăлса хăварчĕç.

Гитлеровецсем пуçпулса тăни ялхуçалăхĕнче те хытă палăрать. Уйрăмах вылльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе нумай сиенленĕ. Чылай районсенче майракаллă выльăх-чĕрлĕх хисепĕ 50—60 процент, сыснасемпе сурăхсен тата качакасен хисепĕ 70—80 процент чакнă.

Ирĕке кăларнă Эстони халăхĕсем халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратма тытăнчĕç те ĕнтĕ. Пур çĕрте те хĕрÿллĕ ĕç пырать. Таллинри предприятисем пĕрин хыççăн тепри ĕçлеме пуçлаççĕ. Электростанци ток пама тытăнчĕ. Заводсем, фабрикăсем, сăкăр пĕçерекен комбинат тата ытти нумай предприятисем ĕçлеме пуçларĕç. Трамвая хута янă. Часах акă культура учрежденийĕсем те уçăлаççĕ. Порта юсаса хута яма тытăннă. Ытти хуласенче те пурнăç йĕркеленсе пырать. Пур çĕрте те гитлеровецсенчен вăрмансенче пытанса пурăннă çынсем хăйсен килĕсене таврăнаççĕ.

Пĕтĕм Эстони халăхĕ çĕршыва нимĕç оккупанчĕсем кÿнĕ сиене хăвăртрах пĕтерсе лартма тăрăшать. Чугун çулсен çывăхĕнчи поселоксемпе ялсенчи 10 пин çын ытла ĕнтĕ чугун çулсене юсама тухрĕç. Эстонецсем сланец кăларакан тата тĕрлĕ промышленноçа юсама тытăнчĕç. Ирĕке кăларнă районсенче пур çĕрте те совет органĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем пуçарнă ĕçсене вырăнта пурăнакан халăхсем туллин кăмăлпа йышăнаççĕ. Çынсем хăйсемех совет органĕсене пырса, ĕçлеме хатĕрри çинчен пĕлтереççĕ. Халăх хастарлăн ĕçлес шухăшпа пурăнни хуçалăха юсаса йĕркене кĕртме кăна мар, тата Эстонире вăрçăччен хинчен те илемлĕрех те хăватлăрах Совет республики туса хума май парĕ.

Эпир аслă вырăс халăхне тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсене, пире фашизм тĕттĕмлĕхне çĕнтерме пулăшнăскерсене, чĕререн тав тăватпăр. Эстони халăхĕ Ленинград тăванла пулăшнине нихăçан та манмĕ.

Пирĕн тĕп задача — фашистла тискер кайăка хăйĕн йăвинчен пĕтерсе тăкма çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшасси пулать. Эстони халăхĕ тăшмана çĕнтерес сехете çывхартас тĕлĕшпе мĕн тумаллине пурне те тăвĕ.

Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн Мускаври представительствинчи пресс-конференцире

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче Мускавра, Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн представительствинче, пресс-конференци пулса иртнĕ. Çав конференцире Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн председателĕ Осубка-Моравский господин сăмах тухса каланă. Конференцире тата Роля-Жимерский генерал-полковник, Минц господин, Ендриховский господин сăмах каланă. Совет пичечĕпе ют çĕршыв пичечĕн пресс-конференцире пулнă йышлă представителĕсем Осубка-Моравский господина Польшăри вăрçă лару-тăрăвĕ çинчен, çав шутра Варшавăри событисем çинчен, нумай ыйтусем панă. Осубка-Моравский господин тата Роля-Жимерский генерал Варшавăри вăхăтсăр пуçласа янă выступление организациленĕ çынсен преступникла ĕçĕсене хытă сивленĕ. Унтан Осубка-Моравский господин тата Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн ытти представителĕсем Польшăн ирĕке кăларнă районĕсенчи лару-тăру çинчен каласа панă тата Польша халăхне чăсрах апат-çимĕç, тумтир тата медикаментсем парса пулăшма кирли çинчен каланă. (ТАСС).

БРИТАНИРИ ХĔРЛĔ ХĔРЕС ПУЛĂШМАЛЛИ ФОНД» КОМИТЕЧĔН ОБЩЕСТВИН «РОССИЙĂНА ДЕЛЕГАЦИЙĔ СОВЕТ СОЮЗНЕ КИЛНĔ

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче Мускава Британири Хĕрлĕ Хĕрес Обществин «Российăна пулăшмалли фонд» Комитечĕн делегацийĕ килнĕ. Делегацире çаксем пур: Артур Абрахамс, Эвелин Абрахамс госпожа тата Мабел Джонсон госпожа.

Аэродромра делегацие Совет Союзĕнчи Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çурупăх Обществисен Союзĕн Исполком председателĕн заместителĕ—медицина службин полковникĕ П. Д. Диваков тата Совет Союзĕнчи Хĕрлĕ Хĕреспе Хĕрлĕ Çурупăх Обществисен Союзĕн Исполкомĕн Великобританири представителĕ С. А. Саркисов профессор хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

КРАМАТОРСКРИ ЙЫВĂР МАШИНОСТРОЕНИ ЗАВОЧĔ ВУНĂ ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ ПАЛЛĂ ТУНИ

Краматорскри Сталин ячĕпе тăракан заводри машиностроительсем хăйсен предприятийĕ 10 çул тултарнине паллă туса ирттерчĕ.

Çав куна машиностроительсем производствăра çĕнĕ ÿсĕмсем тунипе кĕтсе илнĕ. Заводăн пĕр пайне тата теплоэлектроцентралĕн 25.000 киловатт ток паракан турбогенераторне юсаса хута янă.

Завод ĕçлеме тытăннăранпа 10 çул тултарнă ятпа заводра митинг пулса иртнĕ. Митинга пухăннă çынсем пысăк çĕкленÿпе Сталин юлташ патне саламлă телеграмма яма йышăннă. (ТАСС).

Юткинăпа Картавая звенисем пысăк тухăçлă çĕрулми пухса илнĕ

Кемерово облаçĕнчи Мариински районра çĕрулми лартса ÿстерес ĕç ăстисем Анна Юткина тата Анна Картавая çĕрулми кăларса пĕтерчĕç.

Сталинла премн лауреачĕн Юткинăн звени (вăл «Красный Перекоп» холхозра ĕçлет) вăрлăхлăх çĕрулми лартнă виçĕ гектар çĕр çинче 1.700 центнер ытла çĕрулми кăларнă.

СССР Верховный Совет депутачĕн Картаван звени кашни гектартан 375-шер центнер, хăйнĕр участоксенче 728-шар центнер та çĕрулми кăларнă. Пысăк тухăçлă çĕрулми туса илмелли плана иртерсе тултарнăшăн унăн звенинчи 14 колхозницăна ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх 884 центнер çĕрулми панă. (ТАСС).

«НАШЕСТВИЕ» ЯТЛĂ ФИЛЬМА ÿКЕРНИ

Алма-Атари кино ÿкерекен студи Сталинла премн лауреачĕ Л. Леонов çырнă пьеса тăрăх «Нашествие» ятлă кинокартинăна хатĕрлесе çитерет. Фильма режиссер А. Ромм лартать. Тĕп рольсене тава гивĕçлĕ артистсем Ванинпа Жаков выляççĕ. Кино ÿкерекенсем нумай пулмасть, картинăна ÿкернĕ хыççăн, Калининран таврăннă. (ТАСС).

ÇАМРĂК ТЕХНИКСЕМ ШКУЛА ПУЛĂШАÇÇĔ

Çамрăк техниксен Н. М. Шверник ячĕпе тăракан центральнăй станцийĕ 1944 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1945 çулхи майăн 1-мĕшĕ хушшинче шкулсене пулăшмашкăн вĕренÿ пособийĕсем тăвас тĕлĕшпе çамрăк техниксен конкурсне ирттерет. Конкурса физика, хими, математика тата ытти предметсене вĕренмелли пособисене, вăрçăпа спорт инвентарĕсене, çар кабинечĕсем валли тунă материалсене тата вĕренекенсене хăйсене кирлĕ хатĕрсене (ручкăсене, пеналсене, сумкăсене т. ыт. те) йышăнаççĕ.

Конкурса вĕренекенсем, пионер отрячĕсемпе звенисем, çамрăк техниксен кружокĕсем хутшăнма пултараççĕ. Çитес çулхи апрель уйăхĕнче шкулсенче ачасем тунă пособисен выставкисене организацилеççĕ. Çав пособисенчен чи лайăххисене çулла районсенчи тата хуласенчи выставкăсенче кăтартаççĕ. (ТАСС).

Çамрăксене ремесло училищисемпе чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене вĕренме илни

Октябрĕн 1-мĕшĕнче çамрăксене ремесло училищисемпе чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене вĕренме илме (мобилизацилеме) пуçланă. Çав шкулсене 350.000 çамрăка яраççĕ. Вĕсене унта квалификациллĕ металлистсем, строительсем, горняксем, железнодорожниксем, текстильщиксем, ялхуçалăх механизаторĕсем тата ытти специальноçсемпе ĕçлекен работниксем пулма вĕрентеççĕ. Украинăра, Молдавире, Белоруссире, Карел-Финн ССР-ĕнче тата ирĕке кăларнă ытти районсенче çавăн пек шкулсене вăрçă пуçланнăранпа пĕрремĕш хут илеççĕ.

Çамрăксем ĕç резервĕсен шкулĕсене вĕренме питĕ хавассăн каяççĕ. Мускаври, Ленинградри, Горькири, Свердловскри тата ытти хуласенчи ремесло училищисемпе шкулсем нумайĕшĕ вĕренекенсене призыв пуçланиччченех пухса çитернĕ.

Ремесло училищисемпе ФЗО шкулĕсене хăйсен ирĕкĕпе вĕренме кĕрес текенсем Иваново облаçĕнче 400, Хусанта — 500, Воронеж облаçĕнче 900 заявлени панă. Казах ССР-ĕн Ĕç резервĕсен Управленийĕ хăйсен ирĕкĕпе панă çамрăксен 2.500 заявленине ытла, Белоруссире—5.000 заявленине шута илнĕ.

Призыв пункчĕсенче агитаци бригадисем ĕçлеççĕ. Вĕсем çамрăксене ĕç резервĕсен шкулĕсенче мĕнле вĕреннипе тата вĕсенче вĕренекен çамрăксен ĕçĕсемпе паллаштараççĕ. Нумай хуласенче ремесло училищисен воспитанникĕсемпе тата мастерĕсемпе тĕл пулмалли каçсем туса ирттереççĕ, вĕренекенсен выставкисене организацилеççĕ. (ТАСС).

ЯЛСОВЕТ ИСПОЛКОМĔСЕН ПРЕДСЕДАТЕЛĔСЕН КУРСĔСЕМ ПĔРРЕМĔШ ХУТ ВĔРЕНТСЕ КĂЛАРНĂ

Ялсовечĕсен ертсе пыракан работникĕсен квалификацине ÿстермешкĕн РСФСР-ти 45 облаçпа крайра тата автономиллĕ республикăсенче виçĕ уйăх вĕренмелли курсем уçнăччĕ. Çав курссенчен халь ялсовет исполкомĕсен председателĕсем 3 пин çынна яхăн вĕренсе тухнă. Вĕсем унта ялхуçалăх артелĕн уставне, социальнăй обеспечени, суту-илÿ, сывлăха сыхлас ĕç, çутта кăларас ĕç çинчен тата уйхир ĕçне организацилесси çинчен калакан законсене вĕреннĕ, вăйлă тырпул туса илмелли мерăсемпе паллашнă, вырăс чĕлхине тата делопроизводство ĕçне вĕреннĕ.

Вĕренсе тухнисенчен ытларахăшĕ ĕлĕк ĕçленĕ вырăнсенех таврăннă, ыттисем райисполкомсенче вĕсен секретарĕсем, отдел заведующийĕсем пулса ĕçлеме юлнă.

Çав курссене халь çĕнĕ курсантсене пухма тытăннă. (ТАСС).

Кунĕн-çĕрĕн аван çапса, хатĕрлев пункчĕсене татти-сыпписĕр тырă ăсатса тăрса, государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе чыслăн пурнăçлар!



Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз районра малта пырать. Вăл тырра срокчен вырса пĕтернĕ, кĕртыррисене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн та аванс шучĕпе 3.000 пăт тырă панă. Ӳкерчĕк çинче: Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз аван çапать.

С. ФРИД фотоӳкерчĕкĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВĂНА СРОКЧЕН ТЫРА ПАРСА ТАТАССИШĔН ПЫРАКАН АМĂРТĂВĔ (1944 ÇУЛХИ ОКТЯБРЕН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ ИЛНĔ СВЕДЕНИСЕМ ТĂРĂХ)

Районсем	Тырă панă (процентпа)
Вăрнар	101,5
Шупашкар	95,1
Калинино	94,1
Сĕнтĕр	92,0
Ишлей	89,8
Чурачăк	89,7
Советски	86,9
Çĕрпӳ	86,7
Куславкка	85,9
Вăрмар	85,7
Муркаш	84,6
Элĕк	83,9
Етĕрне	82,8
Красноармейски	82,5
Октябрьски	80,5
Улатăр	79,7
Шăхасан	78,8
Йĕпреç	77,6
Тăвай	76,7
Сĕнтĕрвăрри	75,1
Канаш	73,0
Елчĕк	66,7
Первомайски	66,6
Комсомольски	66,3
Хĕрлĕ Чутай	65,9
Çĕмĕрле	62,3
Шăмăршă	59,5
Пăрачкав	59,0
Кувакино	56,7
Чкаловски	49,2
Чăваш АССР-ĕ тăрăх	78,7

Государствăна тырă парса татрăмăр

Етĕрне районĕнчи «Красный Октябрь» колхозра государствăна тырă парас тĕлĕшпе транспорт бригади ĕçлет. Çак бригадăна эпĕ ертсе пыратăп.

Государствăна тырă парас ĕçе пысăк вырăна хурса, эпир, бригада членĕсем, куллен тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Хатĕрлев пунктне кашни кун 50-шар центнер тырă леçсе тăтăмăр. Çапла вара фронтпа çĕршыва тырă памалли плана срокчен тултартăмăр.

Государствăна лайăх та таса тырă патăмăр. Эпир илсе пынă тырра йышăнмасăр тăни пачах та пулман. Мĕншĕн тесен, хамăр тырпула государствăна пама кайиччен эпир пĕтĕмпех лайăх тасатса тирпейленĕ.

Тырă парас ĕçре уйрăмах Медведева, Афонькин, Дроздова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсене хушнă ĕçе яланах чыслăн пурнăçа кĕртсе пычĕç. Вĕсене пурне те колхозри Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

А. ЯДРОВКИНА.
Транспорт бригадин бригадирĕ.

Ĕçкунĕ пуçне—2 килограмм тырă

СĔНТЕР. Кăпасри «КИМ» колхоз уборка ĕçĕсене вĕçлерĕ. Аван çапса пĕтерчĕ, государствăна тырă парса татрĕ. Ку колхоз ĕçкунĕ пуçне 2-шер килограмм тырă валеçет.

П. ФРОЛОВ.

Йĕтĕнпе кантăр татса тирпейлессине хăвăртлатмалла

Кантăрна йĕтĕн техникăллă паха культурăсем пулса тăраççĕ. Анчах вĕсене пухса кĕртесси пирĕн республикăри колхозсенче ытла та çителĕксĕр пулса пырать. Республикăри колхозсем йĕтĕне çурри ытларах, кантăра 80 процент чухлĕ кăна татса пуçтарнă. Уйрăмах кантăрпа йĕтĕне çапса шыва хутасси е çерем çине сарасси чăтма çук юлса пырать. Татнă йĕтĕнĕн 30,5 процентне кăна çерем çине сарнă, кантăра вара 25 процент çеç шыва хутнă. Йĕтĕн татса тирпейлесси уйрăмăнах Улатăр районĕнче япăх пырать. Кунта сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне йĕтĕне пурĕ те 26,6 процент кăна татнă, кантăр татма вара çак вăхăта çитсе те тытăнман. Кувакино, Йĕпреç районĕсем те юлса пыраççĕ. Комсомольски, Вăрмар, Чкаловски районсен ку ĕçе нумай хăвăртлатмалла. Çав районсенчи колхозсенче кантăра шыва хутас ĕçе пачах та пуçăнман. Елчĕк районĕнче пĕтĕм кантăрăн çуррине ытла татнă, анчах кантăр тунине шыва хутма тытăнман. Районри малта пыракан «Осоавиахим» колхозра та татнă кантăра итем çине турттарса пынă та тăкнă, ăна çапса шыва хутасси çинчен шутламаççĕ те.

Кантăрпа йĕтĕн татса шыва хутас е çерем çине сарас ĕç çакăн пек япăх пыни, чăн малтанах, çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсем, уйрăмах агрономсем, çак ĕçрен пăрăннинчен килет. Кантăрпа йĕтĕне татса тирпейлесси вăрахăн пынă пирки государствăна сӳс-кантăр парасси те юлса пырать.

Хăшпĕр районри çĕрĕç пайĕсем сӳс-кантăр халăх хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăннине манна пулас. Вĕсем колхоз председателĕсемпе бригадирсене ку тĕлĕшпе васкатмаççĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссарĕ Малов юлташ Улатăр çĕрĕç пайĕн заведующине Плигускин юлташа йĕтĕнпе кантăр татса тирпейлес тĕлĕшпе колхозсене япăх ертсе пынăшăн хытă ятланă. Комсомольски райçĕрĕç пайĕн заведующине Малышев юлташа та çак ĕçе çителĕксĕр ертсе пынăшăн асăрхаттарнă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ асăрхаттарни вăл ытти районсенчи руководительсене те пырса тивет.

Кантăрпа йĕтĕн татса тирпейлесси — паян тумалли ĕç. Вĕсене татса çапнă хыççăнах çерем çине сармалла е шыва хутмалла. Кашни колхозрах сарнă йĕтĕн е шыва хутнă кантăр мĕнле пулса ĕлкĕрнине сăнаса тăма çак ĕçе пĕлекен çынсене уйăрмалла. Çерем çине сарнă йĕтĕне е шыва хутнă кантăра вăхăтра кăлармалла, пăсăлма памалла мар. Шывран кăларсан е çерем çине сарнине пухсан, йĕтĕнпе кантăра çийĕнчех типĕтсе тыллама тытăнмалла. Çанталăк йĕпе-сапаллă пулсан, шывран кăларнă кантăра авăнсенче, сушилкăсенче е колхозниксен мунчисенче типĕтессине организацилемелле.

Государствăна обязательствăсем тăрăх сӳс-кантăр парасси, тырă парасси пекех, ответлă та паха ĕç. Тылламан кантăра е йĕтĕне тӳрех завода паракан колхозсен транспорт бригадисем организацилемелле, çак ĕçе тума ответлă çынсене уйăрмалла. Çав бригадăсенчи çынсемпе лашасене сӳс-кантăр парса татиччен ытти ĕçе ямалла мар.

Государствăна сӳс паракан колхозсен кантăрпа йĕтĕне тыллама ятарласа звеносем тумалла. Çав звеносем валли ĕç нормисем туса çирĕплетмелле. Лайăх ĕçлекен колхозницăсене хавхалантарма хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх сӳс-кантăр парсан та аван.

Районри çĕрĕç пайĕсен колхозсенче кантăрпа йĕтĕне татса тирпейлес ĕç мĕнле пынине яланах çирĕп контроллесе тăмалла. Кантăрпа йĕтĕне çапсанах, вĕсен вăррине аласа тасатмалла та кладовщик аллине акт тăрăх памалла.

СССР Совнаркомĕ тата Чăваш АССР Совнаркомĕ колхозсенче йĕтĕн-кантăр акса тăвассине лайăхлатмалли мероприятисем çинчен йышăннă постановленисенче йĕтĕн-кантăр вăрлăхне тата сӳсне государствăна панăшăн чылай пулăшу пама пăхнă. Правительствăн çак паха решенине кашни колхозникпе колхозницăна тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Çак кунсенче колхозри пур ĕçсене те туса пĕтеретпĕр

Тăвай районĕнчи Ураскассинчи «Ĕçлĕх çулĕ» колхозра 1-мĕш бригада (бригадирĕ С. Николаев юлташ) тырпулсене пухса кĕртес ĕçре малта пырать. Çак бригада тырпулсене чи малтан вырса пĕтерчĕ. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хыврĕ. Николаев юлташ бригадин обязательство тăрăх государствăна 165 центнер тырă леçмеллеччĕ, вăл сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 178 центнер леçсе 3-мĕш бригадăна пулăшрĕ. Халĕ çак бригада кĕрхи çĕртме тăвать. Бригадăра 25 çын, вĕсем кашниех уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ. Колхоз членĕсем хушшинче мăссăллă ĕçе лайăх туса пыни те ĕçĕн тухăçлăхне нумай хăпартрĕ. Кунта каннă е апат çинĕ вăхăтра яланах хаçат вулаççĕ, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене каласа параççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те вĕçлеме шутлаççĕ.

С. АЛЕКСАНДРОВА.

Аван çапса пĕтерчĕç

ЕЛЧĔК. Патрекелĕнчи «Осоавиахим» колхоз кăçал районра чи малтан тырă вырса пĕтерчĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 1-мĕшпе 2-мĕш бригадăсем аван çапса пĕтерчĕç. 2-мĕш бригадăна Пчелова юлташ ертсе пырать, çак бригада вара пур ĕçре те—малта. Пчелова юлташ хăй бригадинчи колхозницăсем хушшинче агитатор пулса ĕçлет, вĕсене фронтран килекен хыпарсене яланах тĕплĕн ăнлантарса парать. Колхозницăсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхозра халĕ аван çапса, кантăр татса пĕтерчĕç. Халĕ çĕрулми кăларса государствăна параççĕ, кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Кĕрхи çĕртме сухине октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерессишĕн сухаçăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

А. ГОРШКОВ.

Шкул ачисем пулăшаççĕ

ЙĔПРЕÇ. Хурамал ялĕнчи шкул ачисем, вĕренӳ çулĕ пуçланнă пулсан та, колхозсене çаплах пулăшса тăраççĕ. Патова, Горбунова, Александрова учительницăсем ертсе пыракан шкул ачисен отрячĕсем 3 кун хушшинче 10 гектар çинчи кĕлтесене алăпа йăтса капана хывнă. А. Григорьев, Горбунов тата Патов вĕренекенсем куллен 150—175 кĕлте йăтаççĕ. Çак ачасемех тырă вырнă вăхăтра 17 пăт пучах пухнă. «Герой» колхоз ачасем пухнă тырра шкула вĕри апат пĕçерме çĕре панă. Шкул ачисем халĕ «Красный водник» колхоз кĕлтесене капана хывма пулăшаççĕ.

П. КУРАКОВ.

Малтисемпе танлашмалла

КОМСОМОЛЬСКОЕ, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем, уяр çанталăкпа усă курса, аван çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене ăнăçлă туса пыраççĕ. Кăçал уйрăмăнах «Трактор», «Красный Октябрь», «Ударник», «Искра 2-ая» колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем çывăх кунсенчех аван çапса пĕтереççĕ, государствăна обязательствăсем тăрăх тырă парса татнă.

«Трактор», «Ударник» колхозсем кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. Çав колхозсен ĕçри ăнăçлăхĕ ĕçе организацилеме пĕлнинчен килет. Кунта çĕрле те кăнтăрлахи пекех ĕçлеççĕ. Аван çапнă çĕре колхозри мĕнпур çынсене мобилизациленĕ, машинăсемпе туллин усă кураççĕ.

Анчах район нумай ĕçсем тĕлĕшпе кая юлса пырать-ха. Авăна паянхи кун тĕлне пĕтĕм районĕпе 50 процент çеç çапнă. Иртнĕ пилĕккунлăхри графика пурĕ те 52,8 процент кăна тултарнă. Кăçал аван çапас, государствăна тырă парас тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсенче «Пролетарий» (председателĕ Окунев юлташ) «Заветы Ильича» (председателĕ Иванов юлташ), «Ленинская победа» (председателĕ Самаркин), «Победа» (председателĕ Григорьев) колхозсем уйрăмах юлса пыраççĕ. Кунта çак вăхăта çитсе те тырă вырса пĕтермен. «Заветы Ильича» колхозра вырмалли сĕлĕ 30 гектар ытла, «Победа» колхозра вирпе вика вырмалла. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе пуçăнман та. Çак колхозсем юлса пыни пĕтĕмпех вĕсене ертсе пыракансенчен килет. Вăл колхозсенче кăнтăрла çеç ĕçлеççĕ. Пĕр сăлтавсăрах ĕçе тухман çынсен шучĕ те пысăк.

Çанталăк уяр тăнипе усă курса, аван çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене çак кунсенчех вĕçлессишĕн кашни колхозăн тăрăшмалла.

Ф. МАЛЫШЕВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Пирĕн районри колхозсем тырпулшăн мĕнле кĕрешеççĕ

Кăçал уйри тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçре колхозниксемпе колхозницăсем питех те активлăн тăрăшса ĕçлерĕç. Кашни ĕçлеме пултаракан колхозник,—çамрăкки те ватти те,—хăйсен пĕтĕм вăй-халĕсене пухса, колхозăн анлă уйхирĕнче кунĕн-çĕрĕн тăрăшса ĕçленĕ. Эпир кашни колхозрах агитаторсем урлă колхозниксене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановление тĕплĕн ăнлантарса панă. Колхозсем ĕçшĕн хушса тӳлес йĕркене тĕпе хурса ĕçлерĕç. Сăмахран, «Жнейка» колхозра тырă вырнă тата аван çапнă вăхăтра 37 колхознике ĕçшĕн хушса тӳленĕ. «Жнейка» колхоз тырпулсене çапса пĕтерсе амбара кĕртнĕ, государствăна тырă памалли обязательствăна тултарнă, натуроплатăна сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне парса татнă.

Халĕ колхозсенче тырпула пуçтарса кĕртес ĕçсене вĕçлемелли татăклă кунсем çывхарса çитрĕç. Аслă Октябрь уявĕ çывхарса килет. Кашни колхозник уява çитĕнӳсемпе кĕтсе илме тăрăшать. Вĕсен Хĕрлĕ Çар боецĕсенчен юлас килмест. Çавăн пек тупăшпа ĕçлесе, кĕлте кӳрсе пĕтернĕ, государствăна тырă парса татнă тата аван çапса пĕтернĕ колхозсен йышĕ районра ӳссех пырать. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, «Комбайн», Сталин ячĕпе тăракан т. ыт. чылай колхозсем кăçал аван ĕçлерĕç, вĕсем чи малтан аван çапса пĕтерчĕç. Çĕрулми кăларса, кантăр татса пĕтернĕ колхозсем те нумай. Чатукасси ялсоветĕнчи «Труженник» колхоз кăçал лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Ку колхозра вăкăрсемпе ытларах усă курма тăрăшаççĕ.

Кĕлте кӳнĕ вăхăтра «Унгастрой» колхозра та вăкăрсемпе лайăх ĕçлерĕç, халĕ 6 вăкăрпа аван çапнă çĕрте ĕçлеççĕ, молотилкăна ĕçлеттернĕ çĕре кӳлеççĕ.

«Шонар» колхозра аван çапас ĕçсем ăнăçлă пыраççĕ. Колхоз вăрçăн йывăр кунĕсенче Сорм шывĕ çине электростанци туса лартрĕ. Халĕ колхозра электромолотилка çĕрен-кунĕн ĕçлет. Колхоз çак кунсенчех аван çапса пĕтерет.

Хальхи вăхăтра районри колхозсем кĕлте кӳрсе пĕтереççĕ. План тăрăх 18790 гектар çинчен кĕлте кӳмелле. Калас пулать, районри хăшпĕр колхозсем кĕлте кӳрес ĕçе начар организациленĕ пирки, ку ĕçе кăштах вăраха ячĕç. Ку шута Мартынкасси ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоза кĕртмелле. Колхозра туртăм вăйĕ çитмест, çапах та вăкăрсене кӳлсе çӳреме вĕрентмен.

Районри колхозсенче иртнĕ çулта ку вăхăт тĕлне кантăр татса пĕтерейменччĕ, кăçалхи çул кантăрсене сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пур колхозсем те татса пуçтарчĕç, çавăн пекех махоркăна та пуçтарса пĕтернĕ. Хальхи вăхăтра районри колхозсем пурте аван çапаççĕ, çĕрулми кăлараççĕ, государствăна тырă, çĕрулми параççĕ.

Кăçалхи çул пирĕн районри 19 колхоз кок-сагыз акса тăвас тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕç. Вăтамран шутласан, кашни гектартан 10—15 центнера яхăн кок-сагыз тымарĕ тухать. Кок-сагыз акса тăвас енĕпе уйрăмăнах «Красный Борденер» колхозри комсомолка Раиса Петрова ертсе пыракан бригада лайăх ĕçленине палăртмалла. Ку бригада хăйне çирĕплетсе панă 8 гектар çине çуркунне кок-сагыза пĕтĕмпех малтан шăтарса, алă вĕççĕн куçарса лартрĕ. Кок-сагыз плантацине çумкурăксенчен вăхăтра тасатнă тата кăпкалатнă. Кунсăр пуçне икĕ хут тислĕк шывĕпе, пĕр хут кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе типĕлле апат панă. Халĕ ĕнтĕ, малтанлăха кăларса сăнанă тăрăх, алă вĕççĕн лартса ӳстернĕ кок-сагызăн пĕр тымарĕ 75—80 грамм туртать. Пĕр гектар çинчен кок-сагыз тымарĕ 20—25 центнер тухать.

Колхозсенче пахча-çимĕç вăрлăхĕсем тăвас енĕпе кăçал «Волга», «Свобода», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем (пĕтĕмпе 17 колхоз) лайăх ĕçлерĕç. «Чудо Америки» пăрçана пĕтĕм районĕпе 30 центнер, бобы 24 центнер, хăяр вăрлăхĕ 2 центнер подимор вăрлăхĕ 0,25 центнер, редиска вăрлăхĕ 1,5 центнер туса илтĕмĕр. Çавăн пекех сухан, купăста вăрлăхĕсем те тухăçлă пулчĕç. Сталин ячĕпе тăракан тата «Волга» колхозсем помидор, хăяр вăррисене хатĕрлесе çитерчĕç. Купăста вăрри районĕпе пĕр центнер хатĕрлерĕмĕр. Вăл шутран Калинин ячĕпе тăракан колхоз кăна 75 килограмм купăста вăрлăхĕ хатĕрлерĕ.

Кăçалхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе ялсовет исполкомĕсемпе ял Совет депутачĕсем тимлĕн ĕçлерĕç, вĕсем колхозниксем хушшинче массăллă ĕçе тĕплĕн туса пыраççĕ. Именкасси, Янгас, Байсубино ялсовет исполкомĕсен председателĕсем кулленех колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулаççĕ. Именкасси ялсовет исполкомĕн председателĕ коммунист М. Федоров, Байсубино ялсовет исполкомĕн председателĕ Степанов тата ытти юлташсем те колхозсен кулленхи ĕçне кирлĕ пек ертсе пыраççĕ. Федоров юлташ час-часах колхозри ĕçе хăй хутшăнать, ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт тӳрлетме пулăшать. Асăннă ялсоветсенче колхоз председателĕсен отчечĕсене итлессине яланхи йĕркене кĕртнĕ.

Аçта ялсовет исполкомĕсем колхозсене конкретлăн ертсе пыраççĕ, çавăнта колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Хосакасси ялсоветĕнчи «Комбайн», «Пятилетка» колхозсем тырăсене чи малтан вырса пĕтерчĕç, кĕлтесене фронтовой вунăкунлăх хушшинче капана кĕртсе çитерчĕç. «Комбайн» колхоз (председателĕ Галкин юлташ) авăн та çапса пĕтерчĕ. Çавăн пекех «Коммунар» колхоз та (председателĕ Л. Степанов юлташ) кăçалхи çул хăйĕн ĕçне нумай юсарĕ. Колхоз октябрĕн малтанхи кунĕсенче авăн çапса пĕтерет.

Сдельщина йĕркипе ĕçлени кăçал питĕ пысăк усă пани халĕ ĕнтĕ куç умĕнчех. Малтанах сдельщинăпа ĕçлессине пурнăçласа пынă колхозсем тырăсене 5—6 кун малтан вырса пĕтерчĕç, кĕлтесене вăхăтра капана кĕртрĕç.

Халĕ районĕпе 14 пин гектар тыррине çапса амбара кĕртнĕ. Юлашки кунсенче авăн çапасси татах та вăйланчĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă май, колхозниксемпе колхозницăсем ĕçри хастарлăха вăйлатрĕç.

Государствăна тырă парасси чи пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Çак задачăна пурнăçлас тесе, районри колхозниксемпе колхозницăсем тырă леçес тĕлĕшпе 5 хутчен воскресник туса ирттернĕ. Воскресниксем иртнернин результачĕ пысăк пулчĕ. Район октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли обязательствăна 82 процент тултарчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем октябрĕн малтанхи пилĕк кунĕнче государствăна тырă парса тата натуроплата тӳлесе татас тесе тăрăшаççĕ.

Район иртнĕ çулталăк хушшинче ялхуçалăхĕнче чылай çитĕнӳсем турĕ, анчах хăшпĕр ялсоветсемпе колхозсем çаплах çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Шупуç ялсоветĕнчи «Смычка» (председателĕ Журавлев юлташ) тата Крупская ячĕпе тăракан (председателĕ Кириллов юлташ) колхозсем пур ĕçре те тенĕ пекех юлса пыраççĕ. «Смычка» колхоз тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçре кăçал та ытти колхозсенчен кая юлчĕ. Кун пек колхозсен шутне «Большевик» колхоза та кĕртмелле. Ку колхоз тырăсене районра чи кайран вырса пĕтерчĕ, кĕлтесене капана хывас ĕçе те вăрăма ячĕ. Çак колхозсен председателĕсем ĕçе кирлĕ пек организацилеме тăрăшмаççĕ. Лайăх ĕçлекен колхозниксен опычĕпе ыттисене паллаштармаççĕ, ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркене çителĕклĕн пурнăçа кĕртсе пымаççĕ.

Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес тесен, халĕ пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Октябрь уявне мĕнпур ĕçе йăлтах вĕçленипе кĕтсе илмелле.

И. АЛЕКСАНДРОВ.
Красноармейски райсовет исполкомĕн председателĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕ сентябрĕн 30-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Гри-Нэ сăмсахĕнче инçене перекен тупăсен батарейисене пусарса лартнă хыççăн нимĕçсем хирĕç тăма пăрахнă. Кале хулинче перемири тунă, хулара юлнă граждăнла халăха хуларан урăх вырăна куçараççĕ.

Союзниксен çарĕсем Тернгаут хулинчен хĕвеланăçнерехре 6 миля сарлакĕш фронтпа çаплах малалла куçса пыраççĕ, тăшман вĕсене хытă хирĕç тăрать.

Аахен хули районĕнчен пуçласа Люксембургпа Германи чиккине çитиччен патрульсем хытă кĕрешнĕ.

Ытти секторсенче çапăçусем пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ çапăçу районĕнче тата Рейн облаçĕнче кĕрешнĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 30-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

5-мĕш армири американецсемпе акăлчансен чаçĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере малалла куçнă. Адриатика çыранĕнче вăйлă çумăрсем пулнă пирки 8-мĕш арми фронтĕнче çапăçусем пулман.

Енер, çанталăк начар тăнă пирки, союзниксен авиацийĕ вăйлă кĕрешеймен.

* * *

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Кале хулине йышăннă. Гарнизон командирне сентябрĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тыткăна илнĕ. Хулана хӳтĕлесе çапăçнă тĕп вăйсем октябрĕн 1-мĕшĕнче ирхине ирех парăннă. Пĕр-пĕринчен татăлса пĕтнĕ хирĕç тăракан уйрăм вăйсене пĕтерсе пыраççĕ. Тернгаут хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ. Голланди фрончĕн мĕнпур участокĕсенче сентябрĕн 30-мĕшĕнче кунĕпех пĕр чарăнмасăр çапăçнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, лару-тăру улшăнман. Союзниксен çарĕсем савăлланса кĕнĕ вырăнтан хĕвеланăçнерехре тăшман çаплах контратакăсем тăвать. Неймеген хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре хаяр çапăçусем пынă.

Кăнтăр Голландире тата Бельгипе Германи чиккинче союзниксен çарĕсем Ретген хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата Прюм хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре кăштах малалла куçнă. Нанси хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата Жаллокур хули районĕнче тăшманăн вăйлах мар темиçе контратакине сирсе янă. Эпиналь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăшман начар хирĕç тăрать, унта союзниксен çарĕсем Рамбельвиллер хули патне çитнĕ.

Бельфор хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман темиçе хутчен те хаяр контратакăсем тунă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă. Союзниксен çарĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Хĕвеланăç Германири тата Çурçĕр Голландири объекчĕсене хаяррăн пыра-пыра çапнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 1-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

5-мĕш армири американецсемпе акăлчансен чаçĕсем фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче кăштах малалла кайнă. 5-мĕш армири американецсен чаçĕсем Монте-Баталья ятлă çӳллĕ вырăн патĕнче тăшманăн çĕнĕрен пуçласа янă вăйлă контратакине сирсе янă.

Адриатика çыранĕнче акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Савиньяно хулине тăшмантан тасатнă.

Союзниксен авиацийĕ Венеци хулипе Милан хули районĕнчи кĕперсене ăнăçлăн тапăннă тата тăшманăн çапăçусем пыракан районри çулйĕрĕсене пыра-пыра çапнă.

ПАРИЖРИ ИРĔКЛĔХ КОМИТЕЧĔ СОВЕТ СОЮЗНЕ САЛАМ ЯНА

ПАРИЖ, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри ирĕклĕх комитечĕ совет халăхне салам янă. Çав саламра çапла каланă: Францие ирĕке кăларас ĕçре Совет Союзĕ чи пысăк вырăн йышăнса тăнине Франци нихăçан та манас çук. Виçĕ çул хушши калама çук вăйлă çапăçса, Совет Союзĕ нимĕç çарне халтан ячĕ, ăна Кавказран пуçласа Шурă тинĕсе çитиччен, пĕтĕм фронт талккишĕпех чи малтанхи хут питĕ пысăк поражениспе çухатусем тӳстерчĕ, çапла майпа союзниксене Германи çарне пырса çапма хатĕрленсе çитме май пачĕ. Францие ăна унăн халăхĕ нимĕçсене хирĕç тăни çăлса хăварчĕ. Француз халăхĕ çапла хирĕç тăнине Россия тивĕçлĕ вырăна хунă, унăн хаçат-журналĕсем француз патриочĕсен хастарлăхĕ çинчен мухтаса çырнă, — çакна Франци манмĕ.

Франци хăйĕн авалхи культурипе тата хăйĕн чаппе мухтанать,—тенĕ саламра.— Вăл Совет Российи Францин шухăшлавçисемпе художникĕсене хисеплеме чарăнманнине, вăл Франци историйĕнчи чи пысăк событисене палăртса пынине, французсен культурине халăхсен пĕтĕмĕшле культури хушшинче тивĕçлĕ вырăн панине пĕлет. Франци, хăйĕн интересĕсене пĕлсе тăрса, аслă державăсем хушшинче юлма тăрăшать. Франци интересĕсемпе Россия интересĕсем чăннипе нихăçан та пĕр-пĕрне хирĕç пыманнине, çав икĕ наци пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлени хăйсен хăрушсăрлăхне ӳстерме тата пĕтĕмĕшле мир тума кирлине Франци пĕлет. Париж Мускава çав тери туслăн саламлать.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: сентябрĕн 29-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсем Брауншвейг хулинчи объектсене тапăннă.

Сентябрĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсем Карлсруэ хули çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем Хĕвеланăç Германири чугун çул узелĕсене тапăннă.

Англи самолечĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем ĕнер кăнтăрла Рур облаçĕнчи синтетически горючи завочĕсене тапăннă.

Дани патриочĕсен отрячĕ гитлерла полиципе тытăçса илни

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен Копенгагенри полицийĕпе СС çарĕсен начальникĕ çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 27-мĕшĕнче нимĕç полицийĕпе СС çарĕсен отрядне Хадерслев хули таврашне янăччĕ, ăна çавăнта пытаннă «саботажниксен ушкăнне» (урăхла каласан—Дани патриочĕсене) пĕтерсе лартма янăччĕ. Нимĕç отрячĕ датчансем кĕрсе ларнă гостиница патне çывхарсан, гостиницăран çав отряда пеме пуçланă. Пĕр нимĕç унтер-офицерне вĕлермеллех амантнă, нимĕç полицийĕн икĕ салтакне çăмăллăн амантнă. Полицейскисем вара датчансен отрячĕн аманнă командирне арестленĕ. Каярахпа вăл хăйĕн суранĕ пирки вилнĕ. Пĕлтерӳре тата çапла каланă: çав гостиницăна нимĕç полицийĕ сирпĕнтерсе янă, тенĕ.

АРГЕНТИНА ПРАВИТЕЛЬСТВИ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви каланă тăрăх, Аргентинăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ çапла пĕлтернĕ: Аргентинăн Лондонри посолĕ Каркано Англи правительствине нота панă, çав нотăра Аргентина вăрçăри преступниксене хӳтлĕх парас çукки çинчен каланă. «Аргентина посольстви, — тенĕ нотăра, — Англи правительствине çакăн çинчен пĕлтерет: Аргентина правительстви хăйĕн позицийĕ çинчен маларах каласа панине халь тепĕр хут калать. Вăл ун чухне çапла каланăччĕ: «Вăрçăра преступленисем тунăшăн айăплă çынсене Аргентинăра кирек мĕн пулсан та вырăн памастпăр. Вĕсене Аргентинăна укçа хывма е Аргентинăра кирек мĕнле майпа та пулин харпăрлăх туянма ирĕк парас çук», тенĕччĕ».

НИМĔÇСЕМ ÇУРÇĔР ФИНЛЯНДИРЕ ХАЛĂХА ÇАРАТНИ ТАТА ИРСĔР ĔÇСЕМ ТУНИ ÇИНЧЕН ФИНЛЯНДИ ХАÇАЧĔСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 26-мĕшĕнче «Ууси Суоми» хаçат, сентябрĕн 27-мĕшĕнчен вара центрти ытти мĕнпур хаçатсем те Çурçĕр Финляндире нимĕçсем ирсĕр ĕçсем туни çинчен пĕлтерекен хыпарсем пичетлесе кăларнă. Хаçатсенче çапла çырнă: «Нимĕçсем Ровиниеми районĕнче ирсĕр ĕçсем тунă. Вĕсем унтан урăх çĕре куçарнă çынсен хваттерĕсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕнĕ, питĕрнĕ шкафсене çĕмĕрсе уçнă, хаклă пурлăха хăйсемпе пĕрле турттарса кайнă. Вĕсем хирти çĕрулмине кăларса, хăйсемпе илсе кайнă, хăйсен лашисене çапман тырă е вырман тырă çитернĕ, пăлансене нумай вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕç салтакĕсен ушкăнĕсем, чи аякри ялсене кая-кая, темĕн чухлĕ ишсе пĕтернĕ, финн халăхĕн пурлăхне пысăк сиен тунă».

Çак пĕлтерĕве хаçатсем пурте анлăн ăнлантарса параççĕ.

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Финлянди хаçачĕсем Çурçĕр Финляндире нимĕçсем тискер ĕçсем туни çинчен калакан хыпарсене халь те пичетлеççĕ, «Лиитто» хаçат çапла çырать: «Çурçĕр Финляндире ишсе, çĕмĕрсе çӳресе, нацистла Германи хăйĕн чăн питне кăтартрĕ. Нацистсем финсен интересĕсене шута илмен те, илес те çук. Çурçĕр Финляндири халăх нимĕçсен сăтăрла ĕçĕсене пĕтерсе лартмашкăн пирĕн çар руководстви чи çирĕп мерăсем йышăнассине кĕтсе тăрать. Пирĕн опыт тахçанах çакна кăтартса панă: васкамасăр ĕçлесе, эпир нимĕн те тупаймастпăр. Варварсемпе вăрă-хурахсене вăйпа çеç пусарма пулать. Влаçсем мĕн юлнине те пулин çăлса хăварма тăрăшассине пирĕн халăх кĕтсе тăрать. Влассен çав ĕçе халех тумалла».

ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕН ТАТА АНГЛИПЕ КИТАЙ ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ ДУМБАРТОН-ОКСРА КАЛАÇНИ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Думбартон-Оксра Совет Союзĕпе Англи тата Америка делегацийĕсем калаçса пĕтерни хыççăн, унта халь Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Китай делегацийĕсем вăрçă хыççăнхи хăрушсăрлăх çинчен калаçма пуçланă. Çав калаçусем уççăн ирттерме ларупа пуçланса кайнă. Ларура Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарĕ Хэлл, Англи делегацийĕн председателĕ Кадоган тата Китай делегацийĕн председателĕ Веллингтон Ку сăмахсем тухса каланă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ÇАР ВАЛЛИ ÇЫНСЕМ ШЫРАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла агентство — Германин информаци бюровĕ—çар валли çынсем тупас тесе Германире «пурнăçа тата ытларах ансăрлатмалла» туни çинчен пĕлтерет.

Çав бюро пĕлтернĕ тăрăх, Геббельс, тотальнăй мобилизаци туса ирттерес тĕлĕшпе уполномоченнăй пулса ĕçлекенскер, çĕнĕрен çичĕ распоряжени пичетлесе кăларнă. Вĕсенче çара илме тата çар промышленноçĕнче ĕçлеме çĕнĕ вăйсем тупасси çинчен каланă. Çынсем тупас тесе, чиновниксен квалификацине ӳстерекен курссене хупаççĕ. Кредитпа страховой учреждениcенче ĕçлекен служащисен пĕр пайне çара тата çар промышленноçне яраççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче выставкăсем, ярмаркăсем тума тата ют çĕршывсенчи выставкăсемпе ярмаркăсене хутшăнма чарнă. Ресторансемпе гостиницăсен ĕçĕсене чакараççĕ.

КĔСКЕН

● Союзниксен çарĕсем нимĕçсен Па-де-Кале çыранĕнчи инçене перекен мĕнпур туппиcене пурне те тытса илнĕ.

● Ноябрĕн 9-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче Парижра Францири социалистсен партийĕн съезчĕ пулса иртмелле. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

комсомолецсемпе çамрăксен кинофестивалĕ кунĕсенче

çакăн пек фильмсем кăтартать:
октябрĕн 3-мĕшĕпе 4-мĕшĕнче

«Ф Р О Н Т»

Кашни сеанс умĕн лекци пулать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00722. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.